# Ђĕмпĕрти Ђăваш Шкулĕ ревоԓутсин малтанхи ҫулĕсенђе.

**(Аса илнисем).**

Октапĕр Ревоԓутси кăтартнă шкулăн ҫĕнĕ ҫулне Ђĕмпĕрти Ђăваш Шкулĕ пысăк хĕнпе тухрĕ. 1917-мĕш ҫултан пуҫласа 1920-мĕш ҫула ҫитиђђен Шкулра лăпкă пурăнăҫ пулмарĕ, пĕрмай ҫапăҫу-тавлашу пыђĕ, сăмахран, Шкул ăшĕнђе хăйĕн ревоԓутси пулса, 3 ҫул ытла тăсăлса пыђĕ.

Совет шкулĕн ҫулĕ ҫине пур шкул та ҫăмăлах куҫаймарĕ, пур ҫĕрте те кив йĕркене пăсса ҫĕнĕ йĕрке тăвас ĕҫ ҫăмаллăн иртмерĕ. Анђах Ђăваш Шкулне ку ĕҫе тăвасси пуринђен ытла хĕнтерех пулђĕ пулмалла. Шкул ревоԓутсиђђен миҫҫионер йенне (пупсем майлă) ĕҫлесе пынă, ăна патша правиттĕлстви ҫавăншăн усрă, ҫавăншăн ăна ђăтса пурăннă. Миҫҫионер шкулĕн усал йенĕсем—пĕђĕкрех програмă, саккон пошипе ђиркӳ ĕҫĕсене ђи малтанхи вырăна хуни—Ђăваш Шкулне ҫĕнĕ шкулăн йĕркисенђен пур ытам шкулсенђен те инҫе тытса тăнă. Кунсăр пуҫне совет шкулĕн ҫулĕ ҫине куҫма тата пĕр йапала ытă ђарса тăнă. Шкул пуҫлăхĕ—Ђăваш халăхне ҫутта кăларакан, Ђĕмпĕрти Шкула хăй вăйĕпе пуҫласа йарса ăна 50 ҫул пăхса ӳстерекен Иван Йаккăлђ пулнă. 70 ҫулхи И. Й., паллах, ҫĕнĕ йĕрке ҫине куҫма пултарайман. Анђах унăн хăй пăхса ӳстернĕ Шкула тепĕр ҫын аллине парасси килмен. Совет влаҫĕн, халăха ҫутта кăларас ĕҫре тăракансен те ђăваш халăхне ҫутта кăларакан ҫынна вырăнтан кăларма кăмăл ҫитеймен. Анђах ҫапах та ҫĕнĕ пурăнăҫ Шкула ĕлĕкхи йĕркесемпе, ĕлĕкхи пек шухăшлакан пуҫлăхпа хăварма пултарайман. Ҫакăн пирки 1917-мĕш ҫулта Шкулра ҫапăҫу-тавлашу пуҫланђĕ, кăтартнă сăлтавсем пирки вăл тавлашу вăрăма кайрĕ.



**Ҫ. М. Макҫимăв**—Ђĕмпĕрти Ђăваш Шкулĕнђе 1911 ҫултан пуҫласа 1925 ҫула ҫитиђђен йурă-мусăк ĕҫне вĕрентекенге тăнă. Хаԓ Мусăк Шкулĕн пуҫлăхĕ.—1923-мĕш ҫулхи ӳкерђĕкрен.

Ҫав ҫулсенђе епĕ Шкулта пултăм. Ҫак статйара епĕ ҫав вăхăтри Шкулăн пурнăҫĕ ҫинђен мĕн аса килнине кĕскен каласа парасшăн.

---

Ревоԓутси пуҫланас умĕн И. Й. пĕр пысăк шухăш тытнăђђĕ: Шкул тăвăртарах,—ăна аслăлатас, Шкул ваԓԓи пысăк виҫĕ хутлă ҫурт лартас. Вăл вăхăтра шкула пăхакан Хусанти пуҫлăхсем Шкул ҫине сиввĕн пахађђĕҫ, ҫурт тăвас тесен вĕсенђен пулăшу кĕтме ҫукђĕ. Ҫавăнпа И. Й. ҫак ĕҫе Шкул вăйĕпе тăвас тесе пикенсе укҫа пухма тытăнђĕ. Анђах ăҫтан тупас вăл пысăк укҫана? Май пĕрре анђах пулнă: Шкула паракан укҫасене пĕтĕмпех пĕтерес мар, економи тăвас, фермăран нумайтарах тупăш курас, унта ађасене ытларах ĕҫлеттерес. Пĕр тытна шухаша И. Й пăрахман. Вăл ҫултан ҫула кăтартна майсемпе Шкулăн спетсиаԓнай укҫисене ӳстерсе пыђĕ, 1917-меш ҫул вĕҫнелле вăл укҫасем 70 пин тенкĕрен те иртнĕђђĕ.



1. Ђăваш Шкулĕнђе нумайђђен вĕрентсе пурăннă уђитлĕ **В. Н. Орлов.** 2. Технĕккăмĕсен пуҫлăхĕ **О. А. Антрейĕв.** 3. Уԓйанăвскри Ђăваш Петтехнĕккăмĕнђе 10 ҫул ытла истори вĕрентсе пурăннă уђитлĕ **Ҫ. Т. Соттĕн** й-таш.

Укҫа еккономилес ӗҫ вӗренекен ађасене вӗрентес, ҫитерес шутран анђах пулма пултарнӑ. 1916—17-мӗш ҫулсенђе вӗрентӳ ӗҫӗ Шкулра нађарланса пыра пуҫларӗ. Ађасене кӗркунне-ҫуркунне вӗрентес вырӑнне класӗ-класӗпе фермӑна ӗҫлеме йарађђӗҫ. Ӗҫлессе ахађ рапођђи пек ӗҫлеттеређђӗҫ, ӗҫ вӗрентӳпе пӗре те ҫыхӑнса пымасђӗ. 1917-мӗш ҫулта ҫуркунне ађасене киле ир йађӗҫ, кӗҫӗн классене апређ уйӑхӗнђех са:атрӗҫ.

1917-мӗш ҫулта ҫент̆апӗрте ађасем пӑлхана пуҫларӗҫ. III-мӗш класс И. Й-ђа петтитси парат̆, Шкул пурнӑҫӗн нађар йенӗсене йусама ыйтат̆. Петтитси Шкул пурнӑҫне йусама мар, тата ытларах пӑсса йађӗ—И. Й-па ађасем хушшинђе вӑрҫӑ-тавлашу пуҫланса кайрӗ.

Ҫент̆апӗр вӗҫӗнђеХусанта ђаваш пуххи пулђӗ (ђавашсенђен уђретиттӗлнай сопранийе кама йарасси ҫинђен пулнӑ пулас вӑл). Ађасем вӑл пухха телекатсем йарса (Коссолаппӑвпа Реппин кайнӑ пек астӑвап), Шкулӑн нађар йӗркисем ҫинђен сйеса пӗлтерђӗҫ. Сйес, ађасем майлӑ пулса, пулӑшу пама пулнӑ пулас. Сйесра Ађунов И. Й. ҫинђен: „курпӑн ҫынна вилӗм анђах тӳрлетме пултарат̆“ тенӗ теђђӗҫ.

Окт̆апӗр уйӑхӗнђе И. Й. ађасене, усрама укҫа ҫук тесе, киле салатрӗ, тепӗр хут вӗсене (аслӑ классене кӑна) ҫӗн ҫул иртсен анђах пуҫтарђӗ. Ку вӑхӑта ађасем пурте И. Й-ђа хирӗҫ тӑђӗҫ, уђитлӗсем те икӗ пайа уйӑрӑлђӗҫ: пӗрисем—И. Й. майлӑ, теприсем ӑна хирӗҫ.

1918 ҫулта март уйӑхӗнђе Совет влаҫӗн полошенипе инҫпектӑр вырӑнне Шкул совеђӗн претҫетаттӗлне суйламалла пулђӗ. Ђӗмпӗрти ђаваш ӗҫлекенӗсемпе Шкулра вӗрентекенсем, вӗренекенсем суйлав умӗн сопранисем туса, И. Й. Шкул пуҫлӑхне суйламалла мар, тесе, ресођутсисем йышӑнђӗҫ. Ҫавӑнпа Ђӗмпӗрти Ҫутӗҫ Комиссариађӗ суйлав умӗн И. Й. кантитаттурне илђӗ, ӑна суйламалла мар, терӗ. Вара суйлавра претҫетаттӗле П. О. Афанаҫйӗва суйларӗҫ.

Хусанта, ђаваш ӗҫлекенӗсем хушшинђе, Ђаваш Шкулӗн тӗттӗм йенӗсене тӗплех пӗлменнипе, И. Й. ҫинђен шухӑш урӑхла пулнӑ. Суйлавпа И. Й-ђа вырӑнтан кӑ-

**Ђӗмпӗр шкулӗнђе вӗренекен ађасем—ђи малтанхи комуниссем**



Парттине 1918-мӗш ҫулта нойапӗр уйӑхӗнђе кӗрсе Кӗпкомиттет ҫумӗнђе Ђӑваш Ҫекси орканисатсиленӗ. **Тӑраҫҫӗ**—сулахайран сылтӑмалла: **Немтсӑв С.** (Ҫӗпӗрте Хӗрлӗ Ҫарта вилнӗ). **Калмыкков Н., Шевле И.** (кусем иккӗшӗ парттире тӑманскерсем), **Шветсов А., Фетӑрӑв Т. Лараҫҫӗ**—сулахайран сылтӑмалла: **Танилӑв Н., Кослов Р.** (хӗвел-тухӑҫ фронтӗнђе вилнӗ), **Арҫенйӗв К.** (хӗвел-анӑҫ фронтӗнђе вилнӗ). **Антрейӗв В., Кашкӑрӑв М.**

ларнине илтсен, Хусанта ђӑвашсен пухусем пулкаланӑ, унта И. Й-ђа тивмелле мар, тенӗ. Ђӗмпӗре ун ҫинђен хут та ҫитрӗ.

Хусанпа Ђӗмпӗр хушшинђе И. Й. пирки тухнӑ тавлашӑва май уйӑхӗнђе Хусанта пуҫтарӑннӑ ђӑваш вӗрентекенӗсен сйесӗн татмалла пулђӗ. Сйеса И. Й. та пыђӗ. Ӑна хӑш-хӑшӗсем: халӗ ҫӗнӗ саманасем кайрӗҫ, Шкула ҫамрӑкрах ҫын аллине парсан авантарах пулӗђђӗ, тесе каланипе, И. Й. сйесра: Епӗ Шкул пуҫлӑхӗнђен ирӗккӗн тухап, хам вырӑна П. И. Илйина сӗнеп, терӗ.

Анђах сйес иртсен И. Й. каллех урӑх шухӑша кайрӗ: П. Илйина ђӗнме васкамарӗ. Ђӗмпӗре ђехсем илсен, (ийулте) влаҫа И. Й каллех хӑй аллине илђӗ. Совет влаҫӗ Ђӗмпӗре тепӗр хут илсен, Шкулри унђђен пулнӑ тавлашу кӗркунне каллех тытӑнса вӑйланса кайрӗ. Ҫав вӑхӑтра ҫак тавлашӑва Ленин сӑмаххи те хутшӑнђӗ. Ленин: И. И. ђаваш халӑхне ҫулта кӑларас ӗҫне патшан тискер саманинђе 50 ҫул ӗҫленӗ, ӑна вӑл ӗҫрен татма йурамаст̆, тесе телекрам йађӗ.

Ђӑваш Шкулӗн пурнӑҫне тӗпӗ-йӗрӗпе сӑнаса тухма, пыракан тавлашӑва пӗр йенне татса йепле те пулин пӗтерме 1919 ҫулта йанварте Мускавран Ҫутӗҫ Комиссариатӗнђен Потсманӑв инҫпектӑр пыђӗ. Потсманӑв хӑй ӗҫне пӗтерсен, Шкул советне пуҫтарђӗ. Совет виҫӗ кун ӗҫлерӗ. Советра вӗренекен ађасен претставиттӗлӗсем, вӗрентекенсем Шкул пурнӑҫӗн тӗттӗм йенӗсене куҫ-кӗретех кӑтартрӗҫ, И. Й. ҫӗнӗ совет шкулӗн пуҫлӑхӗ пулма пултарайманни палӑрђӗ. Кун хыҫҫӑн вара Мускав та Шкул ӗҫӗсем ҫинђен тӗплӗн пӗлђӗ пулмалла.

1919 ҫулта февралђђен И. Й. хӗрсен шкулӗн претҫетаттӗл вырӑнђе тӑрађђӗ. Феврађте Шкул совеђӗ Шкулра пӗр претҫетаттӗл пулмалла, терӗ. Вара ҫак вӑхӑтран пуҫласа И. Й-ђӑн Шкул ӗҫне хутшӑнмалла мар пулђӗ. Кӗркунне 1919-мӗш ҫулта Шкула аслӑ шкул шутне куҫарсан, И. Й. ывӑлӗ А. И. Шкула ӗҫлеме пыђӗ, Ђав. И. Н. О. правленийӗн ђленӗ пулса икӗ ҫул ӗҫлерӗ.

1922-мӗш ҫулта ҫуркунне Шкӳл пуҫлӑхне И. Н. Йаштайккӗн кӗђӗ. Ҫулла И. Й. Мускава ывӑлӗ патне куҫрӗ.

**Ҫ. М. Макҫимӑв.**